## ИВАНОВ ТАТА УХСАЙ

Культура вăхăт уçлăхĕнче куçнипе мар,
хăйĕн пуянлăхне пухса пынипе малалла каять.

*Д.С. Лихачев*

Ухсай Яккăвĕн Çырнисен пуххин ку томне чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлне К.В.Иванова халалласа, гениллĕ поэтăн пултарулăхне тĕпчесе, хакласа çырнă хайлавсем кĕнĕ.

Кам пулнă-ха Константин Иванов Ухсайшăн? Пултарулăхĕн пуçламăшĕнче Ухсай ун çине ашшĕне хисепленĕ пек хисеплесе, чунĕпе хăпартланса пăхнă. Каярахпа, кунçулĕн вăта çĕрне çитнĕ тĕлелле, — тăван пиччĕшне е çывăх тусне хакланă пек. Ватлăх енне кайсан — ывăлĕ çине пăхнă пек, чунне ыраттарса та çав вăхăтрах унпа мăнаçланса. Атте лайăх пĕлнĕ вăл туйăма — ашшĕ туйăмне: манăн Яша ятлă пичче пулнă-çке. Хушса калам: тимлĕ те юратакан упăшка, кăмăллă атте, чунтан парăннă пичче, хисеплеме пĕлекен ывăл, шанчăклă тус пулнă вăл. Çавăнпа унăн юлташĕ-тусĕсем те нумай пулнă — хамăр халăхра та, тутарпа вырăс, пушкăрт хушшинче те, вĕсен чĕлхипе калаçнă вăл пуринпе те. Мана та калатчĕ: «Хĕрĕм, пурнăçра туссем пулни питĕ кирлĕ, вĕсемпе эп пуян», — тетчĕ.

Константин Иванов — Ухсайăн юратнă поэчĕ. Ивановпа Ухсай çинчен нумай çырнă ĕнтĕ. Ухсай хăй те Иванов çинчен тĕпчев ĕçĕсем сахал мар çырса хăварчĕ. Хамăн очеркра эпĕ авторсен цитатисене çеç час-часах илсе кăтартасшăн, вĕсем çырнин содержанине хам сăмахпа каласа парас теместĕп.

Поэтсем иккĕшĕ те Пушкăртран, Урал тăвĕсем хушшинче вырнаçнă Слакпуç ялĕнчен. Ивановăн ашшĕ пуян çынсенчен пĕри пулнă. Çирĕп кăмăллăскер, нумай пĕлме тăрăшаканскер, вырăсла та, тутарла та, пушкăртла та ирĕклĕн калаçнă, хаçат-журнал çырăнса тăнă. Пуян библиотека пулнă унăн. Калас пулать, вĕсен раттинче вĕре-



К.В. Иванов

нĕве хытă хисепленĕ, поэтăн аслашшĕ те, чылай тăванĕ-пĕтенĕ те хутла пĕлнĕ. Константин Иванов вара виççĕмĕш сыпăкри вĕреннĕ çын, чăн-чăн интеллигент темелле. Пĕлӳлĕхпе интеллигентлăх пĕр мар, вĕсене уйăрма пĕлмелле. Пĕлӳлĕх кивĕ никĕс çинче тытăнса тăрать, интеллигентлăх киввине çĕнетсе аталанса пырать.

Ивановпа Ухсай çемйисем — çывăх тăвансем: Ухсай Ивановăн виççĕмĕш сыпăк урлă шăллĕ шутланать. «Нарспи» авторĕ Ухсайăн ашшĕ-амăшĕпе çывăх хутшăнса пуръннă. Яла пымассерен вĕсем патне кĕрсе тухассине хăйĕн тивĕçĕ тесех шутланă. Унсăр пуçне вăл Кевришпе калаçса ларма юратнă. Кевришĕн чĕлхи, вырăнлă та уççăн сăмахлани илĕртнĕ поэта. Чăнах та, чĕлхене лайăх пĕлнĕ Ухсайăн ашшĕ, лексиконĕ пуян пулнă унăн, хăйне май пултаруллă халапçă пулнă. Çавнашкал чĕлхе çинче (Слакпуç диалекчĕ тейĕпĕр ăна) никĕсленнĕ те ĕнтĕ чăвашсен литература чĕлхи. «Нарспи» поэмăна çав чĕлхепе çырнă.

«Пурнăçĕпе пултарулăхĕн шăпи поэтшăн питĕ трагедиллĕ пулса тухнă. Хăйĕн чи лайăх произведенийĕсене вăл 1906—1908 çулсенче çырса хăварнă. 1915 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче ял масарне тепĕр вил тăпри хушăннă. Кунта туберкулезпа чирлесе вăхăтсăр вилнĕ поэта пытарнă. Пытарма пынă хресченсене поэтăн хайлавĕсем пичетленнĕ «Чăваш халапĕсем» кĕнекене валеçсе панă», — тесе çырать Ухсай.

Çав кĕнеке Ухсай килĕнче те пулнă — Ухсайшăн чăваш поэзи тĕнчине уçса паракан пĕрремĕш кĕнеке, Ивановăн — вун саккăрти поэтăн хăй пурăннă чух кун çути курнă пĕртен-пĕр кĕнеки.

Мĕн илсе çитернĕ-ши çак талантлă çамрăка виле шăтăкĕ умне? Чирĕсĕр пуçне, тен, ун чухнехи лару-тăру та хăй витĕмне кӳнĕ — калăпăр, ĕмĕтсем пысăк, анчах пултарулăх ĕçĕпе чуна парса тăрăшма, калас тенине уççăн ка-



Я. Г. Ухсай

лама май çук. Турă панă таланта çĕре чикниех мар-иха ку. Иванов — Кашкăр йăхĕнчен. Ирĕксĕрех, хăй тĕллĕн, В. Высоцкий юрринчи сăмахсем аса килеççĕ: «Кашкăр сунарĕ пырать, сунар пырать... пур енчен те çавăрса илчĕç...»

Кĕске пулчĕ поэт кунçулĕ. Анчах та таврăнчех вăл тăван халăхĕ патне!

«Константин Васильевич Иванов пĕтĕм пурнăçне, çиçсе тăракан тивлетлĕ талантне пĕтĕмпех чăваш халăхне панă. Вăл чăваш литературине... классика тӳпине çĕкленĕ, унăн сăпки умĕнче хăватлă юрăсем юрланă, хăйĕн ывăçĕ çинчен çитес ĕмĕрсене, малашлăха «Нарспи» поэмине вĕçтернĕ» (Ухсай Яккăвĕ, 1940).

Константин Ивановăн пултарулăх ĕçне Ухсай хăй пурнăçĕ тăршшĕпех тĕпченĕ, пропагандăланă, кĕрешнĕ уншăн. Акă мĕн çырать вăл В.В.Дементьев критик, литература тĕпчевçи патне:

«Хăвăр çырăвăрпа Эсир мана тахçан пулни-иртнине асилме хистерĕр, чĕремре, ватăлса пыракан чунăмра тĕлĕрнĕ тахçанхи сурансене хускатрăр.

Константинăн произведенийĕсем пуçласа Чĕмпĕрте Чăвашсен культурăпа çут ĕç центрĕнче пичетленнĕ. Ун хыççăн вĕсем тепĕр хут 1918—1919 çулсенче çапăнса тухнă. Шупашкарта вара, чăвашсен тĕп хулинче, 1935 çулта кăна, поэт çуралнăранпа 45 çул çитнине палăртнă тĕле, кун çути курнă.

1934 çулхи раштавра эпĕ Мускавран Шупашкара таврăнтăм, Писательсен союзĕн правлени секретарĕнче ĕçлеме пуçларăм та Иванов ятне çĕнĕрен чĕртрĕм. Çав тапхăрти статьясенчен пĕринче ăна пысăк поэт тесе çеç мар, классик тесех каларăм. Литературăри чиновниксене ку уртарсах ячĕ. Вĕсем мана питĕ хытă «тылласа» илчĕç, политика тĕлĕшĕпе тем тĕрлĕ çылăх та тунă тесе айăпларĕç. Ухсай кулак поэта мухтать тесе сас-хура тухрĕ.

Манăн ирĕксĕрех Ёпхĕве куçса кайма тиврĕ. Унта, Пушкăрт ăслăлăх институтĕнче, тĕпчев ĕçĕсем туса пынă вăхăтра поэтăн Çырнисен пуххине хатĕрлесе çитертĕм. Ёпхӳре чăвашла шрифт пулманран Иванов кĕнеки Мускав типографийĕнче пичетленчĕ».

Вăл çулсенче Константин Иванов произведенийĕсене пичетлеме çеç мар, унăн ятне асăнса калаçма та пысăк хăюлăх çитермелле пулнă. Ухсай вара кĕнеке хатĕрленĕ хушăра «Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем» рубрикăпа поэтăн халиччен кун çути курман хайлавĕсене шыраса тупа-тупа умлăн-хыçлăн тĕрлĕ хаçат-журналта кăларса пынă. (Ухсай асăрхаттарнине пăхăр.) Каярахпа вĕсене пĕрле пухса 1934 çулта уйрăм кĕнекен кăларнă. Аслă поэт юбилейĕ тĕлне тухнă кĕнеке чăваш поэзийĕшĕн хаклă парне пулнă*.

Константин Ивановăн пичетре кун çути курман произведенийĕсене шыранă май Ухсай унăн «Шуйттан чури» трагедийĕн пуçламăшне тупать. Аслă поэт шухăшне малалла аталантарса 5 пайлă, прологлă, эпилоглă трагеди çырать. Произведенире усал вăйсемпе (выçкуçлăх, хапсăнчăклăх) мĕскĕн хура халăх асапĕсем контрастлăн ӳкерĕннĕ. Ку тема, сăмах май каласан, халĕ те çивĕч темелле.

Анчах та акă мĕнле çырать Н.Павлов тĕпчевçĕ Ухсай трагедийĕ пирки: «Ухсай Яккăвĕн «Шуйттан чури» трагедине тишкернĕ май ирĕксĕрех ыйту тухса тăрать: вырăнлах-ши хальхи совет драминче искусствăн тахçанах кивелнĕ меслечĕсемпе формисене çĕнĕрен чĕртсе тăратни? Çак рецензие çыраканăн шучĕпе, паянхи тапхăрта киввине чĕртни кирлех те мар. Пирĕн вăхăтри совет драматургийĕн буржуалла çăткăнлăх, усламçăлла хапсăнчăклăх темисене çĕклени кирлех-ши?»

«Шуйттан чури» трагедире укçа этемĕн ăс-тăнĕпе кăмăл еккине епле пусмăрлани çинчен каланă. «Тĕллев патне çитес текеншĕн кирек епле меслет те лайăх» — çак принцип пуç пулса тăрать çăткăнлăх тĕнчинче. Çынпа çын хушшинчи сывă хутшăнусем арканаççĕ, кăмăл-сипет тени йăшса-хавшаса пырать.

---

* К.Иванова халалланă статьясенче çавăн чухнехи идеологи пусăмĕ хытах палăрать, мĕншĕн тесен тĕн ыйтăвĕсене хускатнă чухне çав вăхăтра урăхла çырма та май килмен. Паянхи вулакан çакна ăнланасса шанас килет (*Ред.*).

«Шуйттан чури» трагедие 1991 çулта В.Н.Оринов режиссер Çамрăксен театрĕн сцени çине кăларать.

«Нарспие» аса илер-ха тата.

Ку поэмăна вырăсла темиçе хут та куçарса пăхнă, анчах та çав куçарусем Ухсая çырлахтармастчĕç, поэма авторне тивĕçлĕ куçару кирлĕ пулни паллăччĕ. Юлашкинчен Константин Иванова, чăваш поэтне, унăн çиçсе тăракан пултарулăхне Раççей вулаканĕ умне кăларма май тупăнчĕ.

Ухсай Яккăвĕ В.В.Дементьев патне янă çыруран: «Твардовскипе эпĕ 1938 çулхи февраль уйăхĕнче тĕл пултăм, ăна генийлĕ çамрăк кун-çулĕ çинчен каласа патăм. Вăл питĕ хавхаланса кайрĕ, «Нарспие» вырăсла куçарма кăмăл тунине пĕлтерчĕ. Çакăн çинчен эпир иксĕмĕр Чăваш Писателĕсен союзĕн правленине çыру çырса ятăмăр. Хурав пулмарĕ, ырă ĕç пуçланаймасăрах пăчланчĕ. 1937 çулта мана халăх тăшманĕ тесе ятăма вараланă этемккесемех хуçаланатчĕç ун чух Союз правленийĕнче.

Вăрçă хыççăн Твардовский питĕ ĕçлĕччĕ, пушăрах вăхăт тупăнмарĕ унăн. Вăл вара куçаруçă пулма хăйĕн çывăх тусне — Борис Сергеевич Буштын-Иринина сĕнчĕ.

Куçарăва редакцилеме Твардовские панăччĕ. Çав куçару Шупашкарта пĕрремĕш хут пичетленсе тухрĕ. Ивановшăн пынă кĕрешӳ историйĕ кăткăс. Çав кĕрешӳре мана Твардовскипе Фадеев пулăшрĕç.

Ивановпа Твардовский пирки шухăшличчен малтан Л.М.Пеньковскин «Нарспин» пилĕк куçарăвĕ» статйине вуласа тухăр-ха («Дружба народов» журнал, тăваттăмĕш кĕнеке, 1963).

«Нарспие» Твардовский куçарнă пулсан, ку вăл Ивановшăн тĕнче литературине кĕме çул уçакан паттăрла ĕç пулнă пулĕччĕ. Литературăна ăнсăртран пырса лекнĕ усал чунлă этемккесен, чиновниксен ухмахлăхне пула ку ĕç ăнмарĕ. Çав йĕксĕксемех Иванова «кулаксен юрăçи» терĕç, «буржуалла реакционер» тесе ят кăларчĕç. Мĕн чухлĕ инкек курмарăм-ши эп вĕсене пула — ăна перопа та çырса параяс çук, каласа та кăтартаяс çук. Нумайăшĕ аса килет, аса илсен хăрушă пулса каять».

«Нарспи» куçарăвĕпе паллашнă хыççăн Твардовский çапла пĕтĕмлетӳ тунă: «Ман шутпа, «Нарспие» вырăсла питĕ лайăх куçарнă, оригинала çывăх (йĕркепĕрлĕхпе танлаштарса пăхсан), куçаруçă яланхи пекех тӳрĕ кăмăлпа, поэтла туйăмпа ĕçленĕ. 5.7.1947 ç. Мускав. А.Твардовский».

Унтанпа Борис Иринин куçарнă «Нарспи» темиçе хут

та пичетленчĕ. Константин Иванов ячĕ çĕршыври ытти наци литературисене пуçаракансемпе пĕр рете тăчĕ.

«Нарспие» тăтăшах кăларасси пирки Ухсайпа Твардовский каярахпа та шухăшлама пăрахман. Акă А.Твардовскин «Библиотека поэта» серипе кăларакан кĕнекесен редакторĕ В.Н.Орлов патне янă çырăвĕ:

«Хаклă Владимир Николаевич! Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ мана «Библиотека поэта» редколлегине чăваш литератури классикĕн Константин Ивановăн кĕнекине («Нарспи» поэма тата сăвăсем) кăларасси пирки ыйту тăратма сĕнет. «Библиотекăра» тутар поэчĕ Г.Тукай тухрĕ те ĕнтĕ.

Ум сăмахĕпе асăрхаттарусене Ухсай хăй çырма пулчĕ. «Нарспин» чи лайăх куçарăвĕ тесе Б.Ирининăн куçарăвне шутлаççĕ, хăй вăхăтĕнче ăна эпĕ редакциленĕччĕ.

Мана е тӳрех Ухсая хурав пама тăрăшăр-ха — ĕç тухмалла пек-и?

Эпĕ — кăларассишĕн.

Аллăра чăмăртатăп. А.Твардовский. Мартăн 2-мĕшĕ, 1968 ç.»

Ку кĕнекене «Библиотекăра» кăларма май килмерĕ. 1969 çулта анне сарăмсăр вилчĕ те атте чылай вăхăт ниçта кайса кĕрейми пурăнчĕ. Кĕнеке 1979 çулта тин «Советская Россия» издательствăра тухма пултарчĕ. Пухса хатĕрлекенĕ — Ухсай, анчах та унăн асăрхаттарăвĕсем кĕнекене кĕмен. Вĕсене çак томра автор варианчĕпе вырăсла пичетлетпĕр.

1938 çултах «Нарспие» сцена çине кăларас тĕллевпе Ухсай инсценировка хатĕрленĕ пулнă. 1940 çулта кун пирки тивĕçлĕ договор та çырнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансан ĕç чарăнса ларнă. Тепĕр çирĕм çултан кăна Ухсай хăйĕн пьесине театра сĕнет. Ку вăл эпир яланхи пек ăнланма хăнăхнă инсценировка пулман. «Пысăк калăпăшлăскер (машинкăпа çапнă 165 страница — икĕ пьеса чухлĕ), содержанийĕпе пачах оригиналлă, — тесе çырать ун пирки Ф.А.Романова хăйĕн «Нарспи» поэмăн сцена историйĕ» статйинче. — К.В.Иванов поэмин никĕсĕ çинче Яков Гаврилович хăйне уйрăм произведени çырнă» (Творческое наследие Иванова. Чебоксары, 1990).

Ухсайăн «Нарспи» пьесине Чăваш академи драма театрĕ 1978/79 çул сезонĕнче кăтартнă. Пьесăна лартаканĕ — Л.Н.Родионов режиссер.

1959 çулхи майăн 15-мĕшĕнче «Советская Чувашия»

хаҫатра В.Пименов критикӑн «Кӗскен ҫӗнӗ драматурги ҫинчен» статйи пичетленнӗ. Акӑ мӗн ҫырнӑ унта «Нарспи» ҫинчен:

«Анчах пӗр пьеса кӑна жанр паллисене туллин кӑтартать — ку вӑл Ухсайӑн «Нарспи» трагедийӗ. Прологран пуҫласа — «Кантӑр варӗнче» ятлӑ картинӑран — пьеса вӗҫне ҫитиех, чӑваш хӗрӗн пурнӑҫӗ трагедилле татӑличченех, авторӑн тӗп шухӑшӗ хумханулӑн та вӑйлӑн тапса тӑрать: пурнӑҫ хӑй йӗрӗпех пырать... Ҫутӑ кун ҫитетех. Пурнӑҫ савӑнӑҫӗн, ырра шаннин сывлӑшӗ варкӑшать чӑваш хӗрӗн синкерлӗ шӑпи ҫинчен калакан ҫак ытла та кулянчӑклӑ произведенире. Вилӗм ҫак хӗршӗн — тӗрӗс мар йӗркеленнӗ обществӑран уйрӑлни, ҫав вӑхӑтрах — ҫут ҫанталӑкпа, савнӑ Сетнер чунӗпе пӗрлешни. Акӑ вӑл чӑн-чӑн пьеса, ӑна сцена ҫине кӑларас тесе театрӑн тахҫанах ӗҫлемелле пулнӑ.

Ӗлӗкхи пурнӑҫ тискерлӗхӗ ырӑ чунлӑ ахаль ҫынсене епле пусмӑрлани, тӗп туни ҫине автор паянхи ҫивӗч куҫпа пӑхать, наци характерӗсене чӑннипех те илемлӗ, ытарлӑ чӗлхепе ӳкерсе кӑтартать.

Ӗҫсем ӑҫта пулса иртни, пьесӑн пӗтӗм сывлӑшӗ — йӑлтах наци сӑн-сӑпатне палӑртать, ҫакӑ вӑл пьесӑна классикӑлла драма произведенийӗсен ретне тӑратать.

Ман шутпа, РСФСР Писателӗсен союзӗн правленийӗн Ухсая пултарулӑхӗ тӗлӗшӗнчен хӑйпе пӗр тан куҫаруҫӑ поэт тупса «Нарспи» трагедие сӑнарлӑхпа идеологи енчен оригиналпа пӗр шайра вырӑсла куҫарма ҫине тӑрсах пулӑшмалла».

1941 ҫулта Ухсай К.Ивановпа И.Яковлев ҫинчен ҫырнӑ «Хура элчел» сӑвӑллӑ трагеди пичетлесе кӑларать. Критиксем ку пьесӑна хытӑ тиркерӗҫ (тӗслӗхрен, Н.Даниловӑн «Чӑваш коммуни» хаҫатра 1941 ҫулхи майӑн 23-мӗшӗнче тухнӑ статйи). Б.Бассаргин та хӑйӗн «Яков Ухсай» кӗнекинче поэт ку пьесӑра чӑнлӑхран пӑрӑннӑ тесе тиркешет: «Юратнӑ поэтӑн сӑнарне чӗртсе тӑратнӑ май Ухсай К.Ивановпа И.Яковлев хушшинчи ҫыхӑнӑва ытлашши субъективлӑ уҫса кӑтартать. Ҫак субъективлӑх, чи малтан, тӑван халӑха ҫутта кӑларас тӗлӗшпе нумай-нумай ӗҫленӗ Яковлева прогрессивлӑ деятель пек мар, халӑхран тухакан талантсене ним шелсӗр пӑвса та лапчӑтса тӑракан хаяр гений пек ӳкерсе панинче курӑнать».

«Хура элчел» трагеди вӑл Иванов трагедийӗ ҫеҫ мар, Яковлев трагедийӗ те. Ухсая хӑйне те, «Хура элчеле» те

мĕнле хакланине тĕрĕс ăнланас тесе чăваш халăхĕн асаплă кун-çулĕ çине пăхса илер-ха.

1552 çулта Хаяр Иван çарĕсем Хусан ханлăхне пăхăнтарнă хыççăн çĕнсе илнĕ çĕр çинчи халăхсене вăйпах христиан тĕнне йышăнтарасси патша йĕркин тĕп тĕллевĕ пулса тăрать. XVI ĕмĕр çурринчен пуçласа тăсăлать çак тапхăр...

Акăлчан çулçӳревçи Пр.Томас Атăл тăрăхĕнче пулса курнă хыççăн хăйĕн этнографилле хайлавĕнче çапла çырать: «Чăваш тĕнĕ сĕм аваллăхранах килни паллă».

К.Голубинский XIX ĕмĕр çурринче асăрхани те интереслĕ: «Чăвашсен тĕн ăнланăвĕнче, йăли-йĕркинче христиан тĕнне, мусульман тĕнне, хăйсен нумай туррисене ĕненни пĕтĕмпех пĕрлешсе кайнă, çав вăхăтрах вĕсем пĕрпĕринчен пачах расна».

А.Фукс: «Пĕлетĕн-и, мĕн чухлĕ тăрăшрăм эпĕ чăвашсем Турра мĕнле ăнланни-йышăннине ăнкарас тесе, анчах ниепле те ĕç тухмарĕ. Грексемпе римлянсем пек, вĕсем нумай турăллă. Чăвашсем хăйне уйрăм тĕн шутласа кăларнă, тем тесен те вĕсен тĕнĕ питĕ авалхи».

Аслăлăх ĕçĕсемпе паллашсан чăвашсен тĕн ĕненĕвне ку таранччен те вĕçне çити тĕпчесе пĕтерменни курăнать.

Чăвашсен ăсĕпе сăпайлăхĕ савăнтарса тĕлĕнтерет тата. Акă мĕнле çырать Н.В.Никольский: «Чăвашсем нихăçан та ытти халăхсен тĕнĕсене хирĕç пулман, вĕсене пĕрпĕринчен уйăрса ни ырламан, ни хурламан. «Турă 77 чĕлхе, 77 ĕненӳ тунă, вĕсем пурте пĕр тан», — тет чăваш».

Чăвашсем ытти халăхсемпе хутшăннă чух хăйсене пархатарлăн, чыслăн тытаççĕ, урăх çĕршывсемпе эпохăсен культурине хисеплеççĕ, унсăрăн вĕсен хăйсен культури те аяларахри шайра пулмалла.

Ĕненме чарас, çыннăн ĕненĕвне туртса илес тени вăл унăн чунне илес тенипе пĕрех.

Чăвашсем — авалхи халăх, çамрăк халăх çеç агрессивлă. Çын пекех: çын традицисене тытса-упраса пурăнакан çемьерен пулсан — хуçалăхне те йĕркеллĕ тытать, традицисем йĕркеленсе, çирĕпленсе çитмен çемьерен пулсан — ĕçет, чупать, вăрлать, вĕлерет, кӳршĕ-арша хăратса пурăнать. Ашшĕ-амăшĕ мĕнле — ывăлĕ-хĕрĕ те çапла теççĕ мар-и?

XVIII ĕмĕрти чăваш хресченĕсем урăх тĕне ĕненекенсене хăйсен туррисем çинчен нимĕн те пĕлтересшĕн пулман. «Чăвашран мĕн те пулин ыйтса пĕлессинчен вут чу-

лĕнчен çу чăмăртаса кăларасси çăмăлтарах», — тесе çырнă И.И.Лепехин академик 1768—1769 çулсенче Раççей тăрăх çул çӳренĕ хыççăн.

Хăйсем çинчен пĕлес текенсене хресченсем тĕрĕссипе каласси çинчен мар, калани чиновниксемшĕн кӳренмелле ан пултăр та хăйсемшĕн сиенсĕр пултăр тесе шутланă. «Пĕлмен — пĕр сăмах, пĕлсен — çĕр сăмах» — час-час çак каларăша тĕпе хурса калаçнă вĕсем.

Чăвашсем вырăс влаçĕсене хăйсен Раççейпе пĕрлешичченхи кун-çулĕ пирки ытлах пĕлтерес темен пулмалла. «Çавăнпа анкетăсенче чăнлăхпа килĕшсе тăман хуравсем пур. Калăпăр, чăвашсем Раççей составне кĕриччен камсене пăхăнса пурăннине пĕлмеççĕ пулать. Çав вăхăтрах вĕсен Ылтăн Уртапа Хусан ханлăхĕ тапхăрĕнчен юлнă халап сахал мар. Чĕмпĕр уесне хăçан килнине те астумаççĕ иккен — килсе вырнаçнăранпа вара темиçе теçетке çул анчах иртнĕ. Хĕрарăм тумне илемлетекен тенкĕсем те авалхисем мармĕн — вĕсем ытларах чух авалхисем; чăвашсен пĕр юрă кăна та, туйĕсем те çирĕп йĕркепе иртмеççĕ имĕш — вĕсем пин-пин юрă пĕлеççĕ, туйĕсем те кăткăс йăла-йĕркепе эрнешер тăсăлса иртеççĕ, вĕсенче матриархат палли те, патриархат палли те пур; чăвашăн сăмах вĕççĕн пыракан саккунсем çук имĕш — халăхăн нумай енлĕ аталаннă «правасем» пирки çирĕп ăнлану пулнă. Мĕн тума юранă, мĕн тума юраман т.ыт.те — вăл йăлтах пĕлнĕ; чăвашсем çанталăк палăрăмĕсене пĕлмен тени те тĕрĕс мар — Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсем хушшинче çанталăк мĕнле пулассине чăвашсем чухлĕ нихăш халăх та пĕлмен. Чăвашсен авалхи тĕнĕнче хаяр е ырă турăсем пулман, вĕсем çут çанталăк вăйĕсене (хĕвеле, çумăра, çиле т.ыт.те) хисеплемен, пĕртен-пĕр кĕлĕ кăна пулнă, чир-чĕртен сыватакан вĕрӳ-суру, тухату, вĕре çĕлен çинчен калакан халапсем пулман тенипе те килĕшме çук», — çирĕплетет паллă тĕпчевçĕ В.Д.Димитриев.

Курбский князь чăвашсем çинчен çапла çырса хăварнă: «Чăвашсем пурăнакан çĕрте хаклă сăсар, пакша тата ытти тĕрлĕ вăрман чĕр чунĕ ĕрчет. Çут çанталăк паракан парнене пĕтернипе чăваш çапах та çырлахса лармасть. Вăл килте те выльăх-чĕрлĕх тытать: лаша, ĕне, сурăх, качака, сысна нумай усрать».

«Мĕнпур ĕçсенчен ытларах чăваш çĕр ĕçĕпе пурăнать. «Çĕр ĕçне тумасан тата мĕнле пурăнмалла», — тет чăваш. — Чăвашсем çĕр ĕçĕнче ăслă, тимлĕ пулнине, ĕç йĕркине

питĕ лайăх пĕлнине палăртать В.А.Сбоев этнограф. — Вĕсенчен нихăшĕн те тенĕ пекех тыр-пула хиртен пуçтарса кĕртменни, авăна леçсе вăхăтра çапманни пулмасть. Ку тĕлĕшпе вĕсем вырăс хресченĕсенчен ирттереççĕ. Вырăссем хăйсем те тунмаççĕ кун пирки.

Чăвашсем çанталăк хăçан лайăх е начар пулассине тĕлĕнмелле тĕрĕс пĕлеççĕ, çавăнпа тыр-пула хăçан акса, пуçтарса кĕртмеллине тĕрĕс палăртаççĕ».

«Акă мĕн асăрхарăм эпĕ ку халăхра, — тет Товий Кенигсфельд çулçӳревçĕ (1740). — Чăвашсем ытларах чухне самай çӳллĕ те çирĕп хул-çурăмлă, хура çӳçлĕ, çӳçне хырсах кастарнă. Тумтирĕ вĕсен акăлчансеннине çывăх, çурăм хыçĕнче çакăнса тăракан хĕрлĕпе тыттарнă сарлака пиçиххипе. Хĕрарăмсен кулленхи тумĕ — сарлака вăрăм кĕпе. Пуçĕнче — тенкĕсемпе илемлетнĕ калпак, ун çийĕн — пĕркенчĕк, тăрринче — пурлăх нумаййине пĕлтерекен майрака пекки. Пиçиххине вĕсем кĕленче шăрçасемпе илемлетнĕ ярапаллă тунă, яраписем çурăм хыçĕнче. Хĕрарăмсем хушшинче питĕ илемлисем, калаçма хавассисем, чечен пит-куçлă та çинçе пилĕклисем тĕл пулаççĕ.

Чăвашсем самаях типтерлĕ, хĕрарăмĕсем вăр-вар, çирĕп кĕлеткеллĕ, çавăнпа вĕсем сĕм ватăличченех пурăнаççĕ». [...]

«Т.Кенигсфельд дневникĕнчен илнĕ сыпăксем чăваш халăхĕн историйĕпе этнографийĕ тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсенче чăвашсен темиçе ĕмĕр каяллахи пурнăçне тĕплĕн ӳкерсе кăтартнă. Ку — пĕрремĕшĕ, иккĕмĕшĕ — XVII—XIX ĕмĕрсенче çырса кăтартнисенчен вĕсем объективлăхпа, тенденцилле маррипе, чăвашсем çине ырă кăмăллăн пăхнипе уйрăлса тăраççĕ», — тесе палăртать В.Д.Димитриев историк.

Акă мĕнле çырать тата Г.Аноров: «...Çурчĕ-йĕрĕ вĕсен [чăвашсен] пăхма илемлех мар, анчах илем вăл хула валли кирлĕрех, ял çыннишĕн хăтлăх пултăр. Чăвашăн пурте юнашар, ал айĕнче темелле: çурчĕ, йĕтемĕ, кĕлечĕсем, сухаланă çĕрĕ те вырăссенни пек таçта 15 çухрăмра мар, вăрманĕ çывăх, тырри-пулли те пристаньсене илсе тухса икĕ тĕп хулана сутмалăх юлать, чухăнсем вĕсен хушшинче çукпа пĕрех».

Çырулăх та пулнă чăвашсен, анчах та «чăваш кĕнекине хăмăр ĕне çисе янă». Çак каларăшра истори чăнлăхĕ пурах. Т.Кенигсфельд та чăваш масарĕсем çинче çыруллă чул плитасем пуррине палăртать. Атте мана çавăн пек палăксене хăй куçĕпе курнине каласа панăччĕ.

Авалхи халăхсен культурисем пурте çĕр ĕçлекенрен пуçланнă. Халăх сăмахлăхĕ те, ĕç йĕрки те, пĕр-пĕринпе хутшăнас йăла та. Хресчен культури çапла пĕтĕм наци культурине кĕрет. Мĕн чухлĕ наци, çавăн чухлĕ культура.

Патша правительствипе чиркӳ ирĕксĕрлесе христиан тĕнне йышăнтарнине чăвашсем çине тăрсах хирĕçленĕ. Çак хирĕçлев 1773—1775 çулсенчи хресчен вăрçинче яр уççăн палăрать. Ун чухне нумай чиркӳсене çĕмĕрнĕ, священниксене те нумай вĕлерсе пĕтернĕ.

Христианство пурĕ пĕрех сарăлать, киреметсене çунтараççĕ, чăвашсен авалхи тĕнне — унăн философине пĕтерсе пыраççĕ. Христианство чăвашсемшĕн ют пулнă, вăл халăха çав вăхăтра ним те паман. Хăйсен тĕнне пĕтерсе пыни чăвашсен нумай енлĕ культурине, йăли-йĕркине пĕтерниех пулнă. Чăвашсем çут çанталăк пулăмĕсене: çĕре, шыва, тӳпене — пуççапнă, çут çанталăкпа килĕштерсе пурăннă. Вĕсем хăйсем те çут çанталăк пайĕ-çке. Çавăнпа вĕсем çанталăк мĕнле пулассине малтанах пĕлсе тăнă, çĕр ĕçне тума та, вылькăх-чĕрлĕх пăхса усрама та лайăх пĕлнĕ. Çут çанталăк тĕнĕ вĕсене пурăнма пулăшнă.

Чăваш халăхĕн культури пуян, нумай енлĕ пулнине палăртать наука ĕçченĕ Т.Л.Таймасов.

Çакăн пек халăхран тухнă Константин Васильевич Иванов. Вĕсен аслашшĕсене Елизавета Петровна патшара ларнă чухнех Ишек чиркĕвне çунтарса янăшăн Чăваш çĕрĕнчен хăваласа янă.

Иванов — чăннипех наци поэчĕ. Унăн пултарулăхĕ чăваш пурнăçĕнчен, ĕçĕ-хĕлĕнчен вăй илсе паркаланнă. Унăн произведенийĕсенче чăвашсен авалхи çут çанталăк тĕнĕ тĕп вырăнта тăрать.

«Нарспи» хăçан, мĕнле пичетленнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Цензурăпа миссионерсенчен сыхланса «Чăваш халапĕсем» кĕнекене кĕртнĕ произведенисене пурне те халăх сăмахлăхĕ тесе палăртнă. Титул листин тепĕр енче вĕсене Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей уес çынни К.Иванов пухса хатĕрленĕ тенĕ.

Йывăр пулнă ун чухне кĕнеке кăларасси. Раççейре вак халăхсене хаçат-журнал кăларма, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме чарнă, наци культурине путарса пынă, вырăс мар халăхсене вăйпах «вырăслатас» политика пуç пулса тăнă. Чĕмпĕрте те, Пелепейре те çаплах пулнă.

«1902 çулхи кĕркунне Иванова ашшĕ-амăшĕ Пелепейри хула училищине вĕренме ярать, анчах та унта вăл

çулталăк кăна вĕренет. Шкулти нацисен хирĕçӳлĕхĕ ачана пусмăрласа тăнине пула ăна киле тавăраççĕ», — тет Ухсай.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать, —

тет Иванов «Нарспире». Чăннипех наци поэчĕ пулнăскер, вăл амăш сĕчĕпех кĕрекен халăх тĕнĕпе пурăннă. «Вăйли çук та этемрен» — кун пек шухăша христианин калама пултарайман. Христианин вăл — турă чури. Нарспи те христианка мар.

И.Я.Яковлев, Н.И.Ильминский вĕренекенĕ, тăван халăха çутта кăларассишĕн пĕтĕм пурнăçне панăскер, христиан тĕнĕ çут ĕç никĕсĕ тесе шутланă. Иванов ку шухăшпа килĕшмен, эппин, хăш-пĕр чăваш писателĕсем пек, Иванов пĕтĕмпех Яковлев хыççăн кайнă тесе çирĕплетни тĕрĕс мар. «Константин Иванова, революционер-демократ туйăмĕллĕ поэта, Яковлев тек хавхалантарма пултарайман», — тет Ухсай.

1907 çулхи пуш уйăхĕн 5(18)-мĕшĕнче И.Яковлев шкулĕн ачисем, вĕсен хушшинче К.Иванов та, Иван Яковлевич Яковлев ячĕпе петици çыраççĕ. Петицире Д.И.Кочуров преподаватель чăваш ачисем çине йĕрĕнсе пăхни, вĕсенчен тăрăхлани, тӳрккеслĕхĕ пирки калană. Çав пăлхавлă кунсенче К.Иванов 1905—1907 çулсенчи революцилле событисемпе хавхаланса чăваш марсельезине çырать. Çакăн пек протестленишĕн тата политикăлла митингсене хутшăннăшăн вĕрентӳ округĕн йышăнăвĕпе К.Иванов вĕренекен класа салатса яраççĕ, çапла вара 37 вĕренекен вĕренӳ прависĕр юлаççĕ.

Çав йывăр çулсенче Раççейри учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ реакционерсемшĕн куçа шур илни пекех юлнă. Чĕмпĕрпе Хусан хаçачĕсем шкул çинчен тĕрлĕ элек сараççĕ, реакционер-журналистсем чăвашсем хушшинче вĕренӳ ĕçĕ сарăлса пынине пĕтĕм Атăл тăрăхне çум курăкĕ пусса илнĕ пек кураççĕ.

Çав çулсенче, реакци тапăнăвĕ çивĕчленнĕ вăхăтра, Яковлев тĕн литературине ытларах вĕрентме вăй хурать.

В.А.Сбоев калашле, чăнах та, христиан тĕнне йышăнтара-йышăнтара чăвашсене пĕтĕмпех вырăса кăларма пултарнă.

Чĕмпĕр архиепископĕ Анатолий чăваш чĕлхине манма чĕннĕ. 1838 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Синода тăратнă отчетра вăл çапла çырать: «Чăвашсене тăван чĕлхи мăнаçлантарать, хăй тĕллĕнлĕх пирки ĕмĕтлентерет, çавна май хăйсен йăли-йĕркисене, хăйсен йăнăшĕсене малалла тăсма хистет, вăл чĕлхене, калаçма чарса, пĕчĕккĕн пĕтерсех хумалла, сарма та, илемлетме те юрамасть».

Яковлев йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкет. Шкула çăлса хăварас ĕмĕтпе вăл чиновниксен кăмăлне кайман вĕренекенсене шкултан кăларса ярать.

«1909 çулта Иванов Чĕмпĕрти питĕ культурăллă çын Н.В.Скороходов пулăшнипе халăх учителĕ ята илме экзамен тытать», — çырать Ухсай.

«Пăлхавçăсем» тавра çĕкленнĕ шăв-шав лăплансан Яковлев Иванова шкула тавăрать те чăвашла куçару ĕçне явăçтарать. Иванов чăвашла вĕренӳ кĕнекисене редакцилет, Н.Огарев, А.Кольцов, Н.Некрасов, А.Майков, К.Ушинский, Л.Толстой произведенийĕсене куçарать.

Яковлев Иванова Библи куçарма сĕнет. Вăл чăвашсене Христос вĕрентĕвĕпе паллаштарассине питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутланă, çавăнпа Библипе ытти тĕн кĕнекисене куçарма нумай вĕренекене явăçтарнă.

Иванов «Соломон юррисен юррине» куçарать те чарăнать, вырăс литератури çине куçса М.Ю.Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юррине» куçарать.

«Куçарура Иванов кĕртнĕ хăш-пĕр ылмаш сăмахсем интереслĕ, — тесе çырать Ухсай. — Сăмахран, Кирибеевич

И разделяет по себе злы татаровья
Коня доброго, саблю острую
И седельце бранное, черкасское

тенине çапла куçарнă:

Курайман тăшмансем уйăрса илĕç
Ырă утăмпала çивчĕ хĕçĕме,
Ырă утăм çинчен йĕнерне хывĕç.

«Злы татаровья» вырăнне — «курайман тăшмансем».

«Константин Ивановăн çыру кĕнекинчен вăл сăвăллă юмахсен пысăк ярăмне çырма пуçтарăнни курăнать, анчах ку жанрпа вăл урăх ĕçлемен» (Я.Ухсай).

«Нарспи» хыççăн Иванов тата 7 çул пурăнать, анчах та вĕçлесе пĕтернĕ пĕр произведени те çырмасть» (Я.Ухсай).

«Е ал çырăвĕсем çухалнă» (Иванов аппăшĕн асаилĕвĕнчен).

1905 çул хыççăн реакци вăйланнă вăхăтра чăвашсем хăйсен литературине аталантарма пултарайман. Çамрăк литература кăлчисем пĕтнине курса тăрса Иванов питĕ хытă куляннă.

«Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен кайма пултарайман, — тет Ухсай, — мĕншĕн тесен чăваш литературишĕн вăл хăйĕн çамрăк вăй-халне урăх ниçта та пама вырăн тупайман. Вăл шкултах юлнă, йывăр лару-тăрура та çамрăк чунсене хавхалантарма тăрăшнă. Шанни тӳрре тухнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннисем кайран та Константин Иванов интеллигенцин халăх умĕнчи тивĕçĕ пирки чунтан каланă сăмахĕсене аса илнĕ, хĕрӳ чĕреллĕ çамрăка хăйсемшĕн тĕслĕх тесе хисепленĕ».

Иванов парăнасшăн пулман: чăвашла çырса пичетленме май çук пулсан — Художество академине кĕме хатĕрленмелле, пултарулăха ӳкерӳре палăртмалла. Фотографипе те интересленнĕ Иванов. Чĕмпĕр шкулĕнче вăл фотокружок ертсе пынă. Вăл хăй, Яковлевпа çемйи, Чĕмпĕр шкулĕ — çак ӳкерчĕксене пурне те тенĕ пекех Иванов тунă. Мĕнле интеллигентлă çамрăк пăхать пирĕн çине сăн ӳкерчĕкрен, мĕнле типтерлĕ, килĕшӳллĕ те тăпăл-тăпăл костюмĕ, шурă кĕпи тата «лĕпĕшĕ», чыслă çыннăн илемлĕ аллисем. Пурнăçланаймарĕç унăн ĕмĕчĕсем, хăй шухăшланин пĕр пĕчĕк пайне тунипех çунса кайрĕ вăл — çӳл тӳпене вĕçсе хăпарнă чухне.

«Хура элчел» — чăваш халăхĕн чи лайăх ывăлĕсен трагедийĕ. Икĕ вăйлă, пултаруллă çын тĕл пулаççĕ. Пурнăç тути-масине пĕлсе çитнĕ Яковлев, унăн шкулĕ чăваш шкулĕсем валли учительсем вĕрентсе кăлараççĕ, унта вĕренекенсем нумай енлĕ пĕлӳ илеççĕ. Ĕçе вырнаçнă чух е Раççейри урăх вĕренӳ заведенийĕсене кĕнĕ чух Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнисене яланах пысăк хак параççĕ.

Тата Иванов — талантлă, çутă чунлă максималист, тин çеç пурăнма пуçлакан, анчах пуласлăхра хăйне мĕн пӳрнине пĕлсе тăракан çамрăк. Халăх, çĕр, Тăван çĕршыв — акă мĕн унăн чĕринче.

Сетнер пекех вĕри чĕреллĕ поэт акă мĕнле çырать:

Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур.

Вĕсенчен те хаклăрах,
Чунăм савни, эсĕ пур,
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур.
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен
Унтан усал тĕнче пур.

Ухсайшăн Иванов пултарулăхĕ питĕ çывăх. Иванов — чăн чăваш, пур енĕпе те килĕшӳллĕ, вăл — Ухсай идеалĕ.

«Возлюби ближнего своего, как самого себя», — тесе вĕрентет христиан тĕнĕ.

Кам хăйĕн нацине хисеплет, вăл ытти нацисене те хисеплет.

«Хура элчеле» çырнă чух Ухсай вăтăр çула та çитмен-ха. Ун хыççăнах вăл «Тутимĕр» трагеди çырать. Ку вăл питĕ вăйлă произведени. Тутимĕр — историре пулнă çын. Салават Юлаевпа, Пугачевпа çывăх, вĕсемпе юнашар пусмăрçăсене хирĕç çапăçнăскер пулнă. Трагеди эпиграфĕ — Пĕрремĕш Петĕр указĕнчен илни: «Чăваш ялĕсенче турчăкасемпе сенĕксем тата тимĕр-тăмăр япаласем сутма чарас». «Хусан уесĕнче чăвашсене сутуçăсем тимĕр кĕпе, пăшал, вăрçăра кирлĕ тимĕр япаласем ан сутчăр тесе асăрхамалла, чăвашсене тимĕрпе, кĕмĕлпе ĕçлеттермелле мар» (Из указа Петра I Казанскому воеводе Львову от 31 марта 1697 г. Полное собрание Законов. Ч. II).

Пурнăçĕ тăршшĕпех Я.Ухсай К.Иванов кун-çулĕпе пултарулăхĕ çинчен шухăшлать, тĕпчет, вуншар статья çырать, кĕнеке кăларать. Акă мĕн çырса пĕлтерет вăл А.Н.Макаров критика 1955 çулхи майăн 15-мĕшĕнче: «Халĕ эпĕ революцичченхи поэт, классик Константин Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен монографи çыратăп. Тема питĕ интереслĕ, трагедиллĕ... Кăçалхи май уйăхĕнче çак гений шайне çитекен поэт, тĕлĕнмелле çын çуралнăранпа 65 çул тултарать. Кашни кун ĕçлетĕп, 12 пичет листи патнелле пулмалла, çурри ытла хатĕр ĕнтĕ, анчах та варринче тĕпсĕр шăтăк — архив материалĕсем те, çырусем те çук... ал çырăвĕсем те, кописем те тупăнмарĕç».

Литература тĕпчевçи, библиограф А.К.Тарасенков патне çырнă çырура та Ухсай çав йывăрлăхсенех пĕлтерет: «Константин Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен монографи çыратăп. Йывăр, архив материалĕсем те, çырусем те çук».

Чăваш «язычникĕсен» авалхи йăхĕсем — пантеистсем. Ухсай та хăйне пантеист тесе шутланă. «Думы о Земле» ярăмпа вăл çут çанталăка упрасси пирки 25 ытла статья çырнă: «Трагедия малых рек», «О лесах, водах и заводах», «Когда равнодушие становится преступлением», «Слово об источнике жизни», «Когда Земля плачет» т.ыт.те.

Çыннăн Идеалĕ вăхăт иртнĕçемĕн тĕксĕмленмест пулсан, çав çын телейлĕ.

Иванов ятне чĕртес, ăна халăх асăнче ĕмĕрлĕхе хăварас тесе Ухсай улăпла ĕç тунă.

Константин Васильевич Иванов — чăваш поэзийĕн классикĕ, чăваш литература чĕлхине никĕслекенĕ; Яков Гаврилович Ухсай — чăваш халăх поэчĕ, эпикăлла анлă произведенисен авторĕ. Сăвăлла трагедипе роман жанрĕсен аталанăвĕ те ун ячĕпе çыхăннă. Вăл — К.Ивановăн пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчекенĕ, унăн традицийĕсене малалла аталантараканĕ.

Çак икĕ улăп, вĕсен пултарулăхĕ — чăваш илемлĕ литературин пысăкран та пысăк çитĕнĕвĕ, чăваш культурин калама çук хаклă пуянлăхĕ.

*Ольга Ухсай*